манăн санăн пирĕн

# ÇЕМЬЕ

ĕнер паян ыран



Уçă калаçу

## Йĕркеллĕ пурăнасчĕ

***Пур çамрăк мăшăр та вĕсен çирĕп, йĕркеллĕ çемье пуласса ĕмĕтленет, ачасем çуратса вĕсене тĕрĕс-тĕкел пăхса ӳстерессине... Анчах та пурнăç хумĕсем кашни çынна хăйне май пырса çапаççĕ: пĕрисем вара йывăрлăхран айккине пăрăнса юлаççĕ, теприсем – ăна чăтаймаççĕ, виççĕмĕшсем – темĕнле пулсан та çĕнтерме тăрăшаççĕ. Çапла вара çемьесем те – пĕрисем арканаççĕ, теприсем малаллах талпăнаççĕ. Çирĕп çемье пултăр тесен мĕнле пурăнмалла-ха? Çынсем çемьеллĕ пурăнасси хăçан пуçланса кайнă? Çак ыйтусене хуравлама эпир паян Мăн Сĕнтĕрти чиркӳ настоятельне Игнатий (Суранов) аттене ыйтрăмăр:***

– Турă тĕнчери япаласене туса пĕтерсен, вĕсене тытса тăма этеме тунă. Унтан каланă: этеме пĕччен пурăнма аван мар, ăна пулăшса пыма хăй евĕрлĕскере пултарар, тенĕ. Вара унăн аяк пĕрчинчен пĕрне кăларса илнĕ те арăм туса ăна этем патне ертсе пынă. Çакăнтан, урăхла каласан, тĕнче пуçламăшĕнченех пырать ĕнтĕ çынсем арлă-арăмлă пурăнасси.

Çемье хăй пĕчĕк чиркӳ пулма кирлĕ. Çапла вĕрентет Чăн тĕн. Анчах пĕчĕк пулсан та, тĕрĕс-тĕкел тытса тăма питĕ хĕн ăна. Уйрăмах хальхи вăхăтра. Кашни иккĕмĕш çемье арканать, тенине илтсеттĕм. Пулĕ те. Туй туса пĕрлешес умĕн хĕрпе каччă (тепĕр чухне – уйрăмшарăн) часчасах чиркĕве пырса пиллĕх илеççĕ е иконăсем туянаççĕ. Венчет тусах пĕрлешмелли çинчен аса илтеретĕп те, аллисене сулаççĕ: «Пĕлместпĕр-ха, тен уйрăлмалла пулать? Венчет тăрсан вара уйрăлма юрамасть». Ăçтан çирĕп çемье – ял-йыш илемĕ, çĕршыв тĕрекĕ, Турă мухтавĕ – пултăр çапла калакансен?! Ман шутпа, туй кĕписем туянса, ресторанта заказ парса, чаплă машинăсене тытса укçана çилпе вĕçтерни çеç ку. Тепĕр çамрăкăн ашшĕ-амăшĕн пуçĕнче те çил вылять: «Малтан пĕрле пурăнса пăхчăр, пĕр-пĕрне тĕрĕслеччĕр», – теççĕ ачисем пирки. Çапла каласа вĕсем пысăк йăнăш (тĕрĕссипе, йăнăш та мар, пысăк çылăх) тăваççĕ. Пĕр-пĕрне тĕрĕслеме, урăхла каласан, шухăш ĕмĕрлĕхе пулнине пĕлме туй туса тăкакланиччен вăхăт çук-им?

**– Апла пулсан, мĕнле пурăнмалла-ши арăмĕпе упăшкин çемье çирĕп пултăр тесен?**

– Çемьере арăмĕн упăшкине пăхăнса пурăнмалла, упăшкин вара арăмне юратмалла, – тесе вĕрентет çветуй Павел апостол. Мĕншĕн пĕрин пăхăнмалла, теприн юратмалла? Каларăмăр ĕнтĕ, çемье хăй – пĕчĕк чиркӳ. Чиркӳ пуçĕ – Христос Турă пулнă пек, упăшки те арăмĕн пуçĕ пулать. Çавăнпа арăмĕн упăшкине Турра пăхăннă пек пăхăнса пурăнмалла. Анчах Христос Турă Чиркĕве мĕнле юрататъ (Чиркӳ мухтавлă, тап-таса, пĕр айăпсăр пултăр тесе Вăл Хăйне Хăй вилĕме панă), упăшкин те арăмне çапла юратмалла. Унсăрăн ăçтан килĕшӳ пултăр?

**– Халĕ арăмĕ упăшкине пăхăнасси пирĕн йăлара çукпа пĕрех темелле-çке...**

– Çавăнпах çемьесем саланаççĕ те ĕнтĕ... Арçыннăн çемье пуçĕ пулмалла терĕмĕр. Эппин, унăн яваплăхĕ те пысăкрах: пурăнма йĕркеллĕ условисем туса памалла, тăрантармалла-тумлантармалла, пĕтĕм йывăрлăха хăйĕн çине илмелле тата ыт. те. Енчен те вăл кунĕн-çĕрĕн телевизор умĕнче кăна выртсан е мĕнле майпа мухмăр чĕртмелли пирки çеç шутласан, пĕр сăмахпа каласан, арçын çемьешĕн тăрăшмасть пулсан – ăна ăçтан çемье пуçĕ тесе калăн? Кун пек чухне çав яваплăх пĕтĕмпех хĕрарăм çине куçать. Анчах упăшкине арăмĕ пăхса усрани – хурлăх та, намăс та, мăшкăл та, тенĕ Турă Сăмахĕнче. Çемье тилхепине хăй аллине ярса илнĕ арăм, паллах, упăшкине пăхăнасшăн пулмасть. Хăйне пăхăнман арăмне упăшки юратасшăн мар. Упăшкине телей кӳмен арăм та алла устарать.

**– Пăхăнмалла тенине мĕнле ăнланмалла-ха?**

– Пăхăнмалла тени, паллах, унăн кутăнлăхĕсене пурнăçламалла тенине пĕлтермест. Кунта хатĕр рецепт çук. Турă хĕрарăма ăс-тăн та çителĕклех панă; унпа усă курса тытса пымалла çемье тилхепине. Упăшкипе арăмĕ пĕр-пĕринпе килĕштерсе пурăнни Турра та кăмăллă.

**– Арăмне упăшки пĕрмай эрех ĕçсе тарăхтарать пулсан, унăн мĕнле пурăнмалла?**

– Çак ыйтăва паракансем нумай. «Апла пулсан, мĕншĕн качча тухнă-ха эсĕ ăна? Куçу ăçта пулнă? Пуçу мĕн шутланă?» – тетĕп. «Малтан, каччă чухне, ĕçместчĕ вăл. Халĕ хамăн упăшкана хам та палламастăп – пачах урăх çын тейĕн», – теççĕ. Аха, амăшĕпе пурăннă чух вăл лайăх пулнă, кайран, санпа пурăнма пуçласан, ĕçке яраннă. Айăпли кам?.. Никам та йышăнасшăн мар.

Юлашкинчен çакна каласах килет манăн. Пĕр хĕрарăм çылăх каçарттарнă чухне сывлăш çавăрайми макăрнă: «Эпĕ вĕлерессшĕн марччĕ ăна, вĕлерессшĕн марччĕ...»

– Мĕнле пулса тухрĕха ку? – асăрханса ыйтнă унран священник.

– Сĕтел шăлнă чухне çĕтĕкпе çапрăм та – вилчĕ, – тĕлĕнтернĕ хĕрарăм.

– Кама?!

– Шăнана, – тенĕ те, хăй каллех макăрса янă.

Çиелтен пăхсан шӳт пек кăна курăнать çак калаçу. Кулса илнĕ те, ĕçĕ те пĕтнĕ. Анчах çав священник çын чунĕшĕн хытă тăрăшаканскер пулнă. Малалла калаçтарса каять те хĕрарăма... – виçĕ ачине пăрахса, урăх арçын патне тухса кайнă, унтан – теприн патне, халĕ ку та тивĕçтермест иккен ăна.

– Çакăншăн Турă умĕнче пĕрре те ӳкĕнместĕн-и?

– Мĕн вара уншăн, халĕ пурте çапла пурăнаççĕ, – пулнă хурав.

Çапла, халĕ çылăх «модăна» кĕнĕ. Çынран вăтанасси те çук пирĕн, Турăран хăрасси те... Арăмне е упăшкине улталакана (аскăн ĕç пирки пырать сăмах) Чиркӳ ушкăнĕнчен 7 çуллăха уйăрмалли йĕрке пулнă ĕлĕкрех. Ӳкĕнсе, çылăх тума пăрахнă пулсан та, Туррăн Таса Ӳчĕпе Таса Юнне пая кĕме юраман унăн. Ют çемьене кĕрекен вара вутă çурнă чухне каска варрине савăл çапса çурнă пек çемьене аркатать. Ун пек çынна яланах «ылханса аса илĕç, унăн намăсĕ нихăçан та сирĕлмĕ» тесе каланă Турă Çырăвĕнче.

Ылтăн туй

## Хисеплĕ мăшăр

Çемье çавăрса çур ĕмĕр пĕр-пĕринпе килĕштерсе, пĕр-пĕрне упраса пурăнакан мăшăрсем нумай мар. Çавăнпа та çак мăшăрсене чыслама кашни ял тăрăхĕнчех тăрăшаççĕ.

Акă иртнĕ кунсенче Анатри Панкли ялĕн Культура çурчĕн ĕçченĕсем – Р. Лукина директор, художество пултарулăх ертӳçи В. Николаев, Е. Захарова библиотекарь тата музей ертӳçи Н. Яковлева – хăйсен ялĕнчи хисеплĕ мăшăра çак сăлтавпах саламлама çитрĕç. Вĕсемпе пĕрле шкул ачисем те пулчĕç. Илемлĕ юрăсемпе савăнтарчĕç таврари сумлă çынсене.

Лидия Сергеевнапа Борис Филимонович Филимоновсем пĕрле шăпах 50 çул пурăнаççĕ. Вĕсен ӳсĕмĕнчи нумай çыннăн пекех, çак хисеплĕ ватăсен те ĕмĕрĕ çăмăл килмен. Пурнăçĕ ĕçрех иртнĕ. Иккĕшĕ те хуçалăхра вăй хунă. Борис Филимонович тракторист пулса нумай ĕçленĕ. Лидия Сергеевна вара фермăра тăрăшнă. Кану мĕнне пĕлмен. Çемьери ĕçсенче те яланах пĕр-пĕрне пулăшма тăрăшнă.

7 ача çуратса, вĕсене тĕрĕс-тĕкел ӳстерсе, пĕлӳ парса ура çине тăратнă. Пурте çемьеллĕ ĕнтĕ. Халĕ вара Филимоновсемшĕн мăнукĕсенпе ачисен юратăвĕ килĕштерсе пурăннăшăн каланăчи пысăк тав сăмахĕсем выrăннех.

Пулăшу

## Пысăк тĕрек

Ялта пурăнакан тата ĕçлекен çамрăк çемьесене çурт-йĕр çавăрас е туянас ĕçре патшалăх 2002-2010 çулсене планланă «Пурăнмалли çурт-йĕр» федераллă программăн «Çамрăк çемьесене çурт-йĕрпе тивĕçтересси» подпрограммăпа килĕшӳллĕн пулăшать. Çакăн пирки эпир хаçат страницисенче те пĕлтерсех тăтăмăр.

Çак подпрограмма пирĕн районта та аванах ĕçлесе пычĕ. Çакна район администрацийĕн капиталлă строительство, архитектура тата пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх управленийĕн специалисчĕсем цифрăсемпе те çирĕплетсе пачĕç: 2006 çулта – 7 çемье, 2007 çулта – 9, 2008 çулта – 12, 2009 çулта 4 çемье социаллă тӳлевсем илнĕ.

Çак пулăшу, паллах, çамрăк çемьесемшĕн питĕ кирлĕ те вăхăтлă пулнине хирĕçлеме çук. Çамрăк чух тĕллевĕсем те пысăк, анчах та шăпах укçатенкĕ çитменнипе вĕсене вăхăтра пурнăçлама май килмест.

Çак патшалăх пулăшăвĕпе çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатма черете тăнă çамрăк çемьесем маларах ипотека кредичĕ илнине те саплаштарчĕç.

Çамрăклăх

## Хастар та пултаруллă



*Шурчари Кудашовсен çемйине çирĕппĕнех питĕ туслă та пултаруллă çемьесенчен пĕри тесе калама пулать. Кил ăшшине упракан Лира Николаевна Шурчари шкулта биологипе хими предмечĕсене вĕрентет, Александр Михайлович «Ăшă çурт-йĕр» хупă акционерлă пĕрлешӳре строительсен бригадине ертсе пырать.*

*Виçĕ хĕрне тĕрлĕ енлĕ пултарулăхĕсене аталантарма пулăшса, хавхалантарса, ĕçе хăнăхтарса ӳстереççĕ ашшĕпе амăшĕ. Ачисем те хăйсем пекех активлă пуласса шанаççĕ вĕсем. 7-мĕш класра вĕренекен Анжелика халех питĕ хастар. 2-мĕш класа çӳрекен Татьяна та, 3 çулхи Лиза та маттур ӳсеççĕ.*

*Кудашовсен çемйи тĕрлĕ шайри конкурссене тăтăшах хутшăнса малти вырăнсене çĕнсе илме тăрăшать. Акă пĕлтĕрхи çул кăнаха вĕсем республикăри социаллă видеороликсен конкурсĕнче финалист ятне тивĕçрĕç. Лира Николаевна иртнĕ çул районти «Çултталăк вĕрентекенĕ» конкурсра та «Пултарулăх савăнăçĕ» номинацире çĕнтерме пултарчĕ. Вĕсем Шурча шкулĕ çумĕнче йĕркеленнĕ çамрăк çемье клубĕн ĕçне те интересленсех хутшăнаççĕ.*

*Чăваш юманĕ пек çирĕп çемье пултăр тесе тăрăшаççĕ Кудашовсем.*

Сывă пурнăç йĕркишĕн

## Лайăххине ĕненсе, малашлăха шанса

**Эрех-сăра çынна мĕнлерех сиен кӳнине паянхи пурнăçра сăпкари ача çеç курмасть-ăнланмасть пулĕ. Ытисене вара ăнлантарма та кирлĕ мар – енчен енне сулланса утакансем урамсенче сахал мар, çемьере эрехе пула хирĕçӳ-харкашу кăларакансем туллиех, ачисене симĕс çĕленлĕ кĕленчепе улăштарнисем пайтах... Эрехе пула юхнă куççуль тумламĕсене пуçтарнă пулсан, пирĕн районта та вĕсем пĕр пĕвелĕхех пуçтарăнĕччĕç пулĕ.**

**Эрех ĕçекен малтанах хăйне, хăйĕн сывăх çыннисен пурнăçне пĕтерсе пынипе пирĕн халăхăн пуласлăхне, унăн ырă йăлисене, ĕмĕртен ĕмĕре куçса пынă пурнăçри хаклăлăхсене хулăм та йĕрĕнчĕк йĕрпе чĕрсе пырать. Пирĕн кăмăлсипет çине таса мар аллине хурать...**

**Хамăра хамăр çăлмасан вара... Паллă – эпир «çук халăх» пулатпăр.**

**Вулакана вара пирĕн ентешĕн – Олег Прокопьевăн – пĕр сăввипе паллаштарас килет. Тен, эрех-сăрана килĕштерекенсен пуçĕнче те вăл тарăн шухăшсем çуратĕ, кăшт та пулин ырри енне пăрăнма пулăшĕ. Ĕненес килет.**

Паян КАМПА сыпмаллине эс пĕлĕн,
Ыран пĕлсе сăлтавлăн МĔНШĔНне.
Хăв кăмăлна час-час сăлтавсăр çĕклĕн
Манса ĂÇТА, МĔН ЧУЛЬ ĕçмеллине.

Малтан сана ЮРАТНИПЕ ĕçтерĕç,
Унтан тулать черкке ХИСЕПЛĔСЕ.
Сĕне-сĕнех чысна çилпе вĕçтерĕç,
Кайран ĕçтерĕç хытă ШЕЛЛЕСЕ.

Юратнине ПӲРНЕСКЕпе пĕлтерĕç,
Туссен хисепĕнче типет ЧЕРККЕ,

КУРКА патне сăмахсăрах çитерĕç,
Шеллев – тулли ман АЛТĂР. Тыт, лĕркке...

Малтанласа ПЫЛАК эрех тутанăн,
Пуçа тивмест кайран ХАЯРРИ те.
Пур пурлăхна сутса çука тухсассăн
Чи ШĂРШЛИ те хĕретеймест пите.

Тавсси! тесех çынсем сана улталĕç...
Хăвна çеç эс нихçан хисеплемен.
Юлашкинчен кĕрекерен хăвалĕç:
– Эй-й-й, йĕрĕнчĕк, кунта сана чĕнмен!

**Кăларăма Н. НИКОЛАЕВА хатĕрленĕ.**